**Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен уй-хирĕсенчен**

# Экономика тĕрекĕ çур акирен пуçланать

«Кирек епле ĕçĕн те вăхăчĕ пур. Çав вăхăта ĕлкĕрейменĕн – аталану лавне алăран вĕçертрĕн. Çакна чунпа ăнланатпăр, куçпа курса тăратпăр, паян тумалли ĕçе ырана хăвармасăр ĕçлеме тăрăшатпăр. Çакă пĕтĕмĕшле хуçалăх экономикине тĕреклетнине те, апла пулсан хамăрăн пурнăç та ыра еннелле кайнине, çĕнĕ тĕллевсем çуралнине куратпăр-ăнланатпăр. Çавăнпах умри тĕллевсене вăхăтра пурнăçлама тăрăшатпăр. Хамăр ĕçлемесен пире кам килсе туса парĕ, кĕр çитсен кĕлете тырăна кам кĕртĕ?» – çурхи тĕш тырă культурисене акса пĕтернипе тата паян ирлесех çумăр çунипе савăнса калаçрĕ «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕн тĕп агрономĕ Иван Алексеевич НИКИТИН. Вăл çулталăк ытларах каялла кăна-ха тĕп агроном тилхепине тытнă. Сăмах май, çамрăк агроном хуçалăхра 2003 çултанпах ĕçлет. Ку тăрăхрах çуралса ӳснĕ, Чăваш ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухнă каччă уй-хир ĕçĕсенчен пĕртте уйрăлмасть. Пусă çаврăнăшне мĕнлерех йĕркелесен çĕнĕ технологисене анлăрах кĕртме пулать, çĕнĕ культурăсемпе ĕçлессине ансатлатма епле майсем пур? Ыйтусем нумай. Хĕл кунĕсенче вĕсене туллин татса пани – хуçалăх экономикине çĕнĕ шая çĕклес çĕрти пĕр утăм. Çак ыйтусем никĕслерĕç те агрономăн кăçалхи уй-хир ĕçне.

Хуçалăх юлашки çулсенче кĕрхи культурăсем çине ытларах тимлĕх уйăрма пуçланăран тата иртнĕ кĕркунне кĕртрисене 873 гектар акса хăварни (ку вăл районти хăшпĕр хуçалăхринчен 10-15 хут та нумайрах) çуртрисене акма 742 гектар çеç хăварнă. Кĕрхи культурăсен тухăçĕ шанчăклине пăхсан тата вĕсем кăçал аван хĕл каçнине шутласан, кăçал «Ударниксем» тырăран чухăн пулмасси паянах курăнать.

– Хуçалăх ĕçченĕсем, уйрăмах механизаторсемпе водительсем, çур акире питех те тăрăшуллă пулчĕç. Тырăпулă акнă пек çĕр улми лартнă çĕрте те вĕсем алă усмĕç тесе шутлатăп, – терĕ кĕске тĕл пулура 34-мĕш çур акине тĕп энергетик пулса хутшăнакан, нумай çулсем хуçалăхăн тĕп инженерĕнче ĕçленĕ Николай Николаевич Николаев А. Кузьминпа В. Степанов механизаторсем выльăх хатĕрлемелли агрегатсем патĕнче çӳренине пăхса, – çур аки иртет те «симĕс ĕç çи» пуçланать.

Хуçалăх кăçал çуртрисене 742 гектар çинче акса хăварчĕ. Ытларах пайне хĕреслĕ майпа тата пĕтĕмпех минераллă удобренипе акнă. Çак ĕçре халĕ палăртакан механизаторсем тăрăшуллă пулнă: Иван Иванов, Изосим Васильев, Николай Иванов, Николай Максимов. Вĕсем паян та кашниех çĕр улми лартас ĕçе хăй тӳпине хывать.

«Иккĕмĕш çăкăр» хуçалăхĕпе 340 гектар пулмалла пулсан, паянхи куна (çу уйăхĕн 15-мĕшĕ) 140 гектарне лартрăмăр. Пилĕк агрегат вăй хурать паян çĕр улми лартассипе: И. Владимиров, И. Иванов, В. Антонов, Г. Викторов, А. Михайлов.

– Эпир çамрăк-ха, анчах асаттесемпе аттесем çулла – çуна, хĕлле урапа хатĕрлеме хушнине асрах тытатпăр. Иртнине манманни, паянхине ырана хăварманни, çĕннине алла илессишĕн тăрăшни пулăшать те аслисем туса панă ӳсĕм картлашкисемпе малалла утма. Хамăн сăмахăмра кăçал хальлĕхе пурнăçланă çурхи уй-хир ĕçĕсене пĕтĕмлетсе çапла каласа хăваратăп: «Пĕр чăмăра пĕрлешсе пысăк ĕçсем туса ирттеретпĕр кăçал, анчах ĕçленĕ май çитменлĕхĕсем те, хăшĕсем перекет туйăмне çухатни те, çĕнĕ технологисене алла илмелли те куç умне тухсах пыраççĕ. Ку вăл малашнехи ĕçсен никĕсне хыванĕ тесе шутлатпăр паян. Урăхла çул çук, – терĕ чӳречерен çумăр шакканине кăмăллăн пăхса Иван Никитин çамрăк агроном.

... Календарь çинче çу уйăхĕн 15-мĕшĕ. Кун тăршшĕ 16 сехет те 15 минут. Маларах акнă хирсем ешĕл тум тăхăнма пуçларĕç ĕнтĕ. Умра – вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстересси тата «симĕс ĕç çине» хатĕрленесси. Кунта та хатĕрленӳ ĕçĕсене паян-ыранах пуçăнни вăхăт çитсен выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе пысăк пахалăхпа ирттерме пулăшасси пирки калаçрĕç çак ĕçе хатĕрленме пуçăннă механизаторсем.

Хĕвел тухăçĕнчен татах çумăр пĕлĕчĕсем тухрĕç... Кĕтнĕ çумăр ку çĕр ĕçченĕшĕн. Çуртрисене вăхăтра акса-лартса хăварнă пулсан – пушшех. Тепĕр эрнерен çуртрисене йышăнассипе район шайĕнчи мероприяти иртмелле.

**А. БЕЛОВ.**

**Ĕçсен пĕтĕмлетĕвĕ цифрăсен куçĕпе**

# Муркаш районĕн кăçалхи январь-апрель уйăхĕсенчи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕ

Муркаш районĕ йĕркеленнĕренпе 65-мĕш çул пырать. Пурнăç утăмĕсемпе тан аталанса пырса Муркаш Енĕ çултан-çул ӳсĕм тăвать. Паян пирĕн тăрăхра 177 ял, вĕсем 16 ял тăрăхне пĕрлешсе тăраççĕ. Район территорийĕ 84,5 пин гектар çĕр йышăнать. Вĕсенчен ял хуçалăх пĕлтерĕшлисем 63 пин гектар пулсан, сухаламалла çĕрсем 49,3 пин гектар.

Муркаш Енре 25 ял хуçалăх предприятийĕ, промышленноçпа пăхса тăракан йăла предприятийĕсем 15, икĕ райпо, 67 хресчен (фермер) хуçалăхĕ, районти çыхăну узелĕпе унăн 19 уйрăмĕ, 21 АТС.

Район аталаннине Муркаш тăрăхĕнче пурăнакансене транспортпа çул çӳреме тивĕçтересси мал утăмлă аталанни те уççăн кăтартса парать. Паян ку ыйтупа районта автобус маршручĕсем 19 ĕçлеççĕ. Вĕсемсĕр пуçне уйрăм предпринимательсем тимленипе юлашки çулсенче татах 17 маршрут уçăлчĕ. Çакă тата çынсен харпăрлăхĕнчи 3281 единица çăмăл автомобиль, 803 – груз турттаракан автомобиль, 413 трактор халăха вырăнтан вырăна оперативлă куçса çӳреме, ĕçсене вăхăтра пурнăçлама май парать. Çакăнта 420 километр асфальт çулсем пулни те район пурнăçĕшĕн пĕлтерĕшлĕ.

Çамрăк ăрăва тивĕçлĕ воспитани пама тата çынсене ĕçрен пушаннă вăхăтра пушă вăхăта усăллă ирттерме районта 14 вăтам, 12 тĕп шкулсем пур, пĕр лицей, 4 пуçламăш шкул, 14 ача сачĕ ĕçлеççĕ. 59 клубпа Культура çурчĕ, 39 библиотека, районăн икĕ больници, пĕтĕмĕшле врач практикин 9 офисĕ, 38 фельдшерпа акушер пункчĕ, 26 спортзал – йăлтах ял çыннисем валли.

Кăçалхи январĕн пĕрремĕшĕ тĕлне районта район çыннисен харпăрлăхĕнче 13320 хуçалăх шутланнă, районта 36,9 пин çын пурăннă. Вĕсенчен ĕçлеме пултараканнисем – 18140, садиксенчи ачасем – 1275, шкулсенче вĕренекенсем – 4420, пенсионерсем 10201 çын пулнă.

Мĕнле ĕçленĕ-ха эпир кăçалхи тăватă уйăхра? Малашлăха пăхмалли ӳсĕмсем пур-и пирĕн? Çак ыйтусем район администрацийĕн кун йĕркинчен тухмаççĕ. Хамăр енре Республика кунĕ иртмелле пулнăран вĕсен пĕлтерĕшĕ татах та ӳсет.

Кăçалхи тăватă уйăхра район бюджетне пĕтĕмпе 26652,1 пин тенкĕ укçа пуçтараннă. Ку вăл иртнĕ çулхипе танлаштарсан 169,2 процент пулать. Çав шутра ял тăрăхĕсен бюджечĕ кăçал 4452,5 пин тенкĕ (178,9 процент). Бюджет пуянрах



пулни район пурнăçне тӳрремĕнех витĕм кӳни пирки никамăн та иккĕленӳ çук.

Январь-апрель уйăхĕсенче тӳлевлĕ услугăсем те иртнĕ çулхи виçерен ытларах пулнă. Кăçал пĕтĕмпе 17535,3 пин тенкĕлĕх тӳлевлĕ услугăсем пани пĕлтĕрхинчен 1836 пин тенкĕ нумайрах. Уйрăммăн илсен, тӳлевлĕ услугăсем парассине пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ, «Моргауширайгаз» филиал, «Моргаушрайбыт» чикĕллĕ яваплăхлă общество ӳстерчĕç.

Районăн кăçалхи ĕç кăтартăвĕсене пăхсан, эпир иртнĕ 4 уйăхра 550589 пин тенкĕлĕх продукци туса илни курăнать. Ку вăл пĕлтĕрхипе танлаштарсан 117,3 процент пулать. Уйрăммăн илсен, ял хуçалăх предприятийĕсем те кăçалхи пĕрремĕш тăватă уйăхра пĕлтĕрхинчен тухăçлăрах ĕçлени курăнать. Хăйсен вăйĕпе вĕсем кăçал 120335 пин тенкĕлĕх ĕç тунă (пĕлтĕр – 102560 пин тенкĕлĕх). Çакăнта хуçалăхсем Раççей Президенчĕ çул панă приоритетлă наци проекчĕпе ăнăçлă ĕçлени малта тăрать.

Ял хуçалăх предприятийĕсемпе пĕрлех продукци тирпейлекен предприятисем те ӳсĕмлĕ ĕçленине палăртмалла. Вĕсем çулталăк хушшинче хăйсен ĕç калăпăшне 227,5 процент ӳстерсе 430254 пин тенкĕлĕх продукци хатĕрлерĕç. Вĕсен шутĕнче уйрăмах тухăçлă ĕçленисем çаксем: «Муркашри сĕт завочĕ» чикĕллĕ яваплăхлă предприяти, «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционерлă общество, «Сеспель» хупă акционерлă общество. Вĕсем çулталăк хушшинче хăйсен ĕç кăтартăвĕсене 2,3 – 2,8 хут ӳстерме пултарчĕç. Ку кăтартусем ытти предприяти-организацисемшĕн те тĕслĕх тесе шутлатăп.

Районта потребительсен обществисемпе обществăлла апатлану предприятийĕсем ăнăçлă аталанни те пирĕншĕн çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Пĕрре суйласа илнĕ ӳсĕм çулĕнчен пăрăнмаççĕ вĕсем. Кăçалхи январь-апрель уйăхĕсенче Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен тавар çаврăнăшĕ 166407,5 пин тенкĕне çитрĕ (пĕлтĕрхин 138,6 проценчĕ). Обществăлла апатлану предприятийĕсем вара ĕç кăтартăвне çак тапхăрта 134 процент ӳстерчĕç.

Район ял хуçалăх районĕ пулнăран ял хуçалăх продукцийĕ туса илесси епле шайра пулнине тишкерер-ха тата. Кунта та пит хĕретмеллиех çук. Анчах çиччĕ виççе пăхмалли те, çĕнĕ аталану çулĕсем шырамалли пирки те манма кирлĕ мар. Çулталăк пуçланнăранпа район 2353,4 тонна аш-какай туса илнĕ. Вăл шутран пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем 831 тонна, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 26,5 тонна, килти хушма хуçалăхра 1495,6 тонна. Сĕт сăвасси вара пĕтĕмĕшле иртнĕ çул шайĕнчех юлнă: 14679,8 тонна. Вăл шутран пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем 3507,9 тонна, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 29,8 тонна, килти хушма хуçалăхра 11142,1 тонна.

Тăватă уйăхра пурĕ 21294 пин штук çăмарта илнĕ, мăйракаллă шултра выльăхсем талăксерен вăтамран 560 грамм, сыснасем 327 грамм ӳт хушнă, пĕтĕмпе 1036 пăру тата 5653 сысна çури илнĕ.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче мăйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ чакнă пулсан, килти хушма хуçалăхсенче ӳснĕ. Çав вăхăтрах ĕнесемпе сыснасен, лашасен хисепĕ пур категориллĕ хуçалăхсенче те чакнă.

Тăватă уйăхра халăхран сĕт илесси 900 тонна ӳснĕ (1652,7 тонна). Ку ĕçе уйрăм предпринимательсемпе пĕрлех Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем лайăх туса пыраççĕ.

Демографи лару-тăрăвне илес пулсан, кăçалхи тăватă уйăхра пĕлтĕрхинчен 16 ача сахалрах (119 ача) çуралнă, 20 çын сахалрах (203 çын) вилнĕ.

Ĕççĕррисен хисепĕ 107 çын. Çулталăк каяллахинчен 23 çын нумайрах.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: В. Павлова контролер пассажирсене çула ăсатать («Никита» автовокзал).**

**Вĕренме килĕр**

# Ял хуçалăх академийĕ кĕтет

Шкулсенче вĕренӳ çулĕ вĕçленсе пынă май мал туртăмлă çамрăксен аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кайма вăхăт çитет. Çак кунсенче район администрацийĕн ял хуçалăх пайне хамăр республикăри ял хуçалăх академийĕнчен çамрăксене тĕллевлĕ вĕренме илесси пирки пĕлтерни çитрĕ. Кунта пĕр çĕнĕлĕх пирки каласа хăвармалла. Ытти çулсенче куçăмлă тата куçăмсăр майпа вĕренекенсем тĕрлĕ вăхăтра вĕренме кĕнĕ пулсан, кăçал çак ĕç пĕр вăхăтра пулса иртет. Малашлăха пăхакан çамрăксем академире агронома, зоотехника, ветеринара, бухгалтера, экономиста, технолога, инженера т. ыт. те вĕренме пултараççĕ. Тĕллевлĕ вĕренме кĕрекенсен пур специальноçпа та очно майпа вĕренме çулталăкне 10000 тенкĕ, куçăмсăр майпа вĕренме (заочно) 7000 тенкĕ укça тӳлемелле.

Ял хуçалăх академине куçăмлă майпа район урлă тĕллевлĕ вĕренме каяс текенсен июнь вĕçлениччен, куçăмсăр майпа вĕренме кăмăл тăвакансен август пуçланиччен район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕпе çыхăнмалла.

**Н. СМИРНОВА,**
**ял хуçалăх пайĕн ертсе пыракан специалист-эксперчĕ.**

**Прокуратура материалĕсем тăрăх**

## *Тасалăхшăн*

Районти ялсем тавраш̆ĕнче, юхан шывсемпе плотинасен çыранĕсенче, шывсем çинче, çынсем канмалли вырăнсенче граждансем, предприятисемпе организацисем çут çанталăка сыхлас законодательствăна епле пăхăннине тĕрĕслеме апрелĕн 17-мĕшĕнчен тытăнса çу уйăхĕн 15-мĕшĕччен ЧР Шалти ĕçсен министерствин, РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн, вырăнти самоуправлени органĕсен вăйĕпе «Тасалăхшăн» операци иртрĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе хаçатăн çитес номерĕнче паллашма май пулĕ.

**В. МИХАЙЛОВ, районти шалти ĕçсен пайĕн милицин участоксенчи уполномоченнăйĕсен уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

## *Налук тӳлессипе*

Район прокуратури налук службин районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕпе тачă çыхăнса ĕçлеме пуçланă. Сăлтавĕ – предприятисен налук парăмĕсен суммисем ӳсни. Çав вăхăтрах «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционерлă обществăра тата «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» патшалăх унитарлă предприятийĕнче налук тӳлессипе парăмсем çук. Асăннă предприятисен ертӳçисем налук суммине контроллесех тăраççĕ.

**Е. ЕГОРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

## *Айăплине шыратпăр*

2008 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнче Мускав – Хусан автоçул çинче Юнкăпуç тĕлĕнче çул хĕресленнĕ вырăнтан Мускав еннелле 890 метрта 1972 çулта Астрахань облаçĕнчи Ахтубинск хулинче çуралнă Виктор Александрович Кандыбин виллине тупрăмăр. Пĕрремĕш тĕрĕслевсем ăна вĕлернине кăтартса пачĕç. Çавăнпа та ку инкек тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçартăмăр. Кун пирки курни-илтнисене район прокуратурине пĕлтерме ыйтатпăр.

**М. ТАРАСОВ,**
**Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ.**

## *Ĕç вырăнĕпе усă курнăшăн*

Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕнче должноçри çынсене ĕç вырăнĕпе хăйсемшĕн усă курнăшăн айăплав пăхнă. Нумаях пулмасть çакнашкал тĕслĕх пулчĕ. 2008 çулхи çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикинчи прокуратури çумĕнчи Следстви комитечĕн Следстви уйрăмĕн Етĕрнери районсем хушшинчи пайĕнче суя справка панипе саккуна пăснине пăхса тухрăмăр. Çакă паллă пулчĕ, 2007 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче «Юнкăри вăтам шкул» муниципаллă вĕренӳ учрежденийĕн директорĕ Владимир Геннадьевич Федоров хăйĕн интересĕсене мала хурса тата тăванне пулăшас тĕллевпе Малиновка ялĕнче пурăнакан Василий Вениаминович Федорова çар службинчен пăрăнма вăл асăннă шкулта технологи учителĕнче ĕçлет тесе çар комиссариатне тăратма суя справка хатĕрлесе парать. Ку ĕçре халĕ Владимир Геннадьевич Федоров тĕлĕшпе РФ Уголовнăй Кодексĕн 285 статйин 1-мĕш пайĕпе тата 292 статйипе уголовнăй ĕç пуçартăмăр.

**С. КОШКИН, Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн аслă следователĕ.**

**Çĕнĕ сăвăсем**

# Сых пулар-и пушартан?

Автортан. Ку сăвва эпĕ ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешекен хастарсене халалласа çыратăп. Вĕсен ĕçĕ пархатарлă тенине никам та хирĕçлемĕ. Шартлаттарса çунакан пушара куçа-куçăн тăрса ăна çĕнтересси, вăл е ку çын пушар хăрушсăрлăхне пăхăнманнипе вăй илнĕ инкеке çăварлăхласа унран ытти пурлăха çăлса хăварасси – пысăк паттăрлăх. Акă кăçал çулталăк пуçланнăранпа район территорийĕнче 8 пушар алхасрĕ, çĕршер пин тенкĕлĕх пурлăх кĕлленчĕ. Ирĕке кайнă вутра пĕр çын пурнăçĕ таталчĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăрпа танлаштарсан, кăçал пушар хăрушсăрлăхĕпе лару-тăру лайăхрах, анчах çакă вăл пур пĕрех пире лăпланма ирĕк памалла мар. Сăмах май, пĕлтĕр районта алхаснă 59 пушарта 9 çын çунса кайни хăех вут-кăвар хăрушлăхĕ пирки калать. Çакă пушар хуралĕнче тăракансен ответлăхĕ пирки те пĕлтерет. Чыс та хисеп Сире!

Никама-ниме те пурнăçра
Чăрсăр «хĕрлĕ автан» шеллемест.
Ăна чараймарăн вăхăтра –
Пурлăх, кил-çурт кĕл пулса вĕçет.
Çавăнпа та тимлĕ пит ялан
Районти пушар сыхлавçисем.
«01» телефон сас парсан,
Самантрах çула тухаç вĕсем.
Кирлĕ çĕре вăхăтра çитсе
Пусараççĕ «хĕрлĕ автана»,
Пур çынна калаççĕ вĕрентсе:
– Ирĕке ан ярăр тек ăна!
Ан тыттарăр шăрпăк ачсене,
Пӳлĕмре ан туртăр пирусне,
Сӳнтермесĕр пӳртри вучахне
Ан тухсамăр килтен ĕмĕрне...
Çухалса ан кай эс нихăçан,
Çунатне «автан» сарма тăрсан.
Вăхăтра пире хыпарласан,
Пулĕ пулăшу Сире ялан.
Асра тытăр çак сĕнӳсене
Ирĕн-каçăн пурте малашне,
Пурнăçра никама та ниме
«Хĕрлĕ автан» шеллеменнине.

**Игорь МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.